25-мěш çул тухать. Хакě 15 пус.

1942
МАЙ
10
ВЫРСАРНИКУН
107 (6042) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Суракине ирттерес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

3. **Калинински районри «Çĕньял» колхоз** (колхоз председателĕ **А. Ф. Федоров** юлташ). Ир акмалли культурăсене колхоз 6 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Ака вăхăтĕнче пуринчен ытла **И. Г. Герасимов** бригади лайăх ĕçленĕ, çав бригада хăйĕн планне 5 ĕç кунĕнче тултарнă. Суха тăвакансем — **Т. Петров, Петрова** тата сўрелекен **К. Прокопьева** юлташсем çуракинче фронтри пек ĕçленĕ. Т. Петровпа Петрова кулленхи нормăна 120—130 процент, К. Прокопьева 150—160 процент тултарса пынă.

4. **Калинински районри «Социализм» колхоз** (колхоз председателĕ **К. С. Спиридонов** юлташ). Колхоз лайăх пахалăхпа ĕçлесе ир акмалли тĕштырă культурисене 5,5 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. **Федоровăн** бригали тĕштырăсене 5 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Оборона фондне хывма тата фашистла пусмăртан ирĕке кăларнă районсенчи колхозсемпе колхозниксене тăванла пулăшу пама колхоз планран ирттерсе 2 гектар акнă. Суха тăвакан **Митрофанов** кулленхи нормăна 140 процент тултарса пынă.

5. **Хĕрлĕ Чутай районĕнчи ВКП(б) ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Гурьянов** юлташ). Ир акмалли тĕштырă культурисене колхоз 6 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Оборона фондне хывма колхоз планран ирттерсе 4 гектар акнă.

Май уйăхĕнчи социализмлă ăмăрту итогĕсемпе малашнехи задачăсем

Оборона продукцине туса кăларас ĕçе вăйлатмалли майсенчен пĕри — рабочисен, инженерсен, техниксен, служащисен, колхозниксен социализмлă ăмăртăвĕ пулса тăрать. Ĕçри хавхаланупа социализмлă ăмăрту отечественнăй вăрçă кунĕсенчи пек нихăçан та вăйлă пулман. Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчех фабрикăсемпе заводсенче икĕ çыншăн ĕçлес движени пуçланса кайрĕ, часах вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсем — двухсотниксем ўссе çитĕнчĕç.

Предприятисенчи, транспортри ăмăрту уйрăмăнах Май уявне кĕтсе илнĕ вăхăтра анлăн сарăлса кайрĕ. Май уйăхĕнчи ăмăртура предприятисенчи коллективсем апрель уйăхĕнчи плана срокчен тултарма, ĕç тухăçлăхне ўстерме, продукци пахалăхне лайăхлатма обязательствăсем илчĕç.

Пирĕн республикăри промышленноçра Май уйăхĕнчи ăмăртăва пуçарса яраканĕ — электроаппаратура завочĕн коллективĕ пулчĕ. Уяв уйăхĕнчи ăмăртăва хутшăнса, вĕсем апрель уйăхĕнчи плана срокчен тултарма, ĕç тухăçлăхне ўстерме, çĕнĕ йышши продукци туса кăларас ĕçе йĕркелесе яма, цехсенче, столовăйсенче, общежитисенче тасалăхпа йĕркелĕх тума обязательствăсем илчĕç. Завод коллективĕ çак обязательствăсене чыслăн пурнăçларĕ. Апрель уйăхĕнче завод, ĕç тухăçлăхне ўстерсе пырса, март уйăхĕнчипе танлаштарсан 78 процент ытларах продукци туса кăларчĕ.

Заводăн дирекцийĕ, партбюро тата завком социализмлă ăмăрту договорне тăтăшах тĕрĕслесе пынă, ăмăртура малта пыракансен ĕçне ятарласа тухакан листовкăсенче çутатса тăнă. Апрелĕн 21-мĕшĕнче тухнă листовкăра инструментальнăй цехри Маковская работница хăйĕн ĕç нормине 300 процент, Короненко юлташ 288 процент тултарни çинчен çырнă. Листовка рабочисене ăмăртура малта пыракансенчен пример илме чĕнет.

Çавăн пекех апрель уйăхĕнчи производствăллă программăна Çĕмĕрлери комбинатпа Куславкка комбиначĕ те ăнăçлăн тултарчĕç.

Апрель уйăхĕнчи плана вырăнти промышленноçпа промкоопераци системисене кĕрекен артельсемпе мастерскойсем те чылай ирттерсе тултарчĕç. Шупашкарти «Индпошив» мастерскойĕ 116,6 процент, Ленин ячĕпе тăракан фабрика 125 процент, Сĕнтĕрвăрринчи «Портной» артель 120 процент тултарчĕç.

Кун пек примерсене татах та нумай илсе кăтартма пулать.

Производство программине ирттерсе тултарнă предприятисен коллективĕсем, май уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене тупăс, çак ĕçре малта пыракансене палăртрĕç тата иккĕмĕш квартал планне срокчен тултарассишĕн ăмăртса ĕçлеме тытăнчĕç. Çак пархатарлă пуçарăва республикăри пур предприятисемпе промартельсен те йышăнса илмелле.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ майăн пĕррремĕшĕ ячĕпе кăларнă лозунгсем, Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн приказĕ, Кузнецкри металлургсен чĕнĕвĕ пирĕн республикăри предприятисенчи рабочисем, инженерсем, техниксем, служащисем хушшинче социализмлă ăмăртăвăн çĕнĕ çĕкленĕвне пуçарса ячĕç. Социализмлă ăмăрту железнодорожниксемпе речниксем хушшинче те сарăлса тата вăйланса пырать. Нумай пулмасть Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ «Промышленность предприятийĕсен ĕçĕри лайăх кăтартăвĕсемшĕн» пама куçса çўрекен ялав тума йышăнчĕç. Çак ялава ĕçре чи лайăх тĕслĕхсем кăтартакан, рабочисем, служащисем, инженерно-технически работниксем хушшинчи партиллĕ-политикăллă тата воспитаниллĕ ĕçе кăтартуллă туса пыракан предприятие парăççĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обком бюровĕн решенийĕ пирĕн республикăри предприятисен коллективĕсене социализмлă ăмăртăва малалла анлăн сарса пыма, ĕç тухăçлăхне ўстерме тата промышленность оборудованийĕсемпе лайăхрах усă курма хушать. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çўрекен ялавне илессишĕн республикăри пур предприятисен коллективĕсем те кĕрешеççĕ, ăна вара ăмăртура пуринчен мала тухакан предприятие парĕç.

Парти, комсомол тата профсоюз организацийĕсем социализмлă ăмăртăва шуллен ертсе пыма тивĕçлĕ, ăмăртăва кашни рабочи, кашни служащи, инженерпа техник хутшăнмалла тăвас пулать, производствăна çĕнĕрен пынă рабочисемпе работницăсене те ăмăрту тулашне хăварас пулмасть. Социализмлă ăмăрту чăн-чăн массăллă, хăватлă ăмăрту пулса тăтăр. Ăмăртусен опычĕ çакна кăтартать: ăмăртăва кашни рабочи хутшăннă тата ăмăрту мĕнле пынине кулленех тĕрĕслесе тăнă çĕрте предприяти мала тухать, лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Предприятисен ĕçĕнче çитĕнў тăвас тесен, çамрăк рабочисене, юлса пыракансене мастерсемпе стахановецсем енчен пулăшса тăрассине организацилес пулать. Малта пыракан рабочисен ĕç опычĕсемпе ыттисене паллаштарас тĕлĕшпе стахановла шкулсене лайăхрах ĕçлеттерес пулать, стена хаçачĕсен ĕçне вăйлатас пулать.

Уйрăм предприятисемпе артельсенче рабочисен ĕçне тĕрĕс организацилеменни, вĕсене материалсем çителĕксĕр е кая юлса парса тăни обязательствăсене тултарма чăрмантарать, рабочисен ĕç тухăçлăхне чакарать. Производство командирĕсемпе парторганизацисен задачи — çавăн пек çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтересси, рабочисене тухăçлă ĕçлеме кирлĕ условисене пĕтĕмпех туса парасси пулать.

Социализмлă ăмăртăва колхозниксемпе колхозницăсем те анлăн хутшăнаççĕ. Май уйăхĕнчи ăмăртура вĕсем çуракине тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илессишĕн кĕрешрĕç. Халĕ, çураки пуçланнă хыççăн, çурхи культурăсене акса хăварассишĕн канма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Çуракине кĕске срокра тата лайăх пахалăхпа ирттерес, кăçалхи вăйлă тырпулăн никĕсне хурса хăварас лозунг ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсем хушшинчи ăмăртăвăн тĕп задачи пулмалла.

Шăп 13 çул каялла — 1929 çулти майăн 9-мĕшĕнче — ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ фабрикăсемпе заводсен социализмлă ăмăртăвĕ çинчен постановлени йышăнчĕ. Çак историллĕ постановлени халĕ те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн фабрикăсемпе заводсенчи, транспортри, колхозсемпе совхозсенчи социализмлă ăмăрту — ĕç тухăçлăхне ўстерекен, продукци пахалăхне лайăхлатакан, техникăна малалла яракан хăватлă вăй пулса тăчĕ. Социализмлă ăмăрту халĕ, Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисем фронтшăн ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ чухне, çĕршыва фронта кирлĕ продукцисене ытларах та ытларах кăларма пулăшать.

Социализмлă ăмăрту ялавне тата çўлерех çĕклер!

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсен 1942 çулта çĕрулми памалли нормисем çинчен

Хĕрлĕ Çар çĕрулми ытларах ыйтнине шута илсе, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ **çапла йышăнаççĕ:**

1942 çултан пуçласа Чăваш АССР-ĕнче колхозсем çумне çирĕплетнĕ çĕр лаптăкĕн кашни гектарĕнчен колхозсен çĕрулми памалли нормине районсем тăрăх çакăн пек тăвас (килогрампа шутласан):

№ №	Районсем	МТС-сем ĕçлесе паракан колхозсем	МТС-сем ĕçлесе паман колхозсем
1	Етĕрне	72	83
2	Сĕнтĕрвăрри	62	71
3	Октябрьски	52	60
4	Красноармейски	33	38
5	Хĕрлĕ Чутай	42	48
6	Куславкка	38	44
7	Советски	38	44
8	Çĕрпў	38	44
9	Шупашкар	38	44
10	Улатăр	33	38
11	Вăрнар	28	32
12	Йĕпреç	28	32
13	Ишлей	28	32
14	Калинински	28	32
15	Канаш	28	32
16	Первомайски	28	32
17	Пăрачкав	28	32
18	Сĕнтĕр	28	32
19	Вăрмар	28	32
20	Шăмăршă	28	32
21	Шăхасан	28	32
22	Çĕмĕрле	28	32
23	Елчĕк	28	32
24	Элĕк	23	26
25	Комсомольски	23	26
26	Кувакино	23	26
27	Чкаловски	23	26
28	Тăвай	23	26

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ А. СОМОВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсен, колхозниксемпе единоличник хуçалăхĕсен 1942 çулта государствăна обязательнăй йĕркепе çăм памалли нормисем çинчен

Вăрçă нушисене тивĕçтерме çăм ытларах кирлĕ пулса тăнă майпа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ **çапла йышăнаççĕ:**

1942 çултан пуçласа Чăваш АССР-ĕнче колхозсен çĕр лаптăкĕн кашни гектарĕнчен, колхозник килĕсен тата единоличник хуçалăхĕсен кашни сурăхĕнчен, çак çулти январĕн 1-мĕш тĕлне пулнă пур тĕрлĕ çулхи сурăхсен хисепĕнчен шутласа, государствăна çăм памалли нормăна районсем тăрăх çакăн пек тăвас (çурма-шултăра çăма грампа шутласан):

№ №	Районсем	Колхозсем пĕр гектартан	Колхозник килĕсем кашни сурăхран	Единоличник хуçалăхĕсем кашни сурăхран
1	Улатăр	120	600	800
2	Елĕк	120	600	800
3	Вăрнар	120	600	800
4	Йĕпреç	120	600	800
5	Ишлей	120	600	800
6	Калинински	120	600	800
7	Канаш	120	600	800
8	Куславкка	120	600	800
9	Комсомольски	120	600	800
10	Хĕрлĕ Чутай	120	600	800
11	Кувакино	120	600	800
12	Сĕнтĕрвăрри	120	600	800
13	Октябрьски	120	600	800
14	Первомайски	120	600	800
15	Пăрачкав	120	600	800
16	Советски	120	600	800
17	Сĕнтĕр	120	600	800
18	Красноармейски	120	600	800
19	Вăрмар	120	600	800
20	Çĕрпў	120	600	800
21	Шупашкар	120	600	800
22	Чкаловски	120	600	800
23	Шăмăршă	120	600	800
24	Шăхасан	120	600	800
25	Çĕмĕрле	120	600	800
26	Етĕрне	120	600	800
27	Елчĕк	120	600	800
28	Тăвай	120	600	800

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ А. СОМОВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

СССР Наукăсен Академийĕн пĕрлехи пухăвĕ

СВЕРДЛОВСК, майăн 8-мĕш. (ТАСС). Ĕнер СССР Наукăсен Академийĕн пĕрлехи пухăвĕн ирхи ларăвĕнче хĕвелтухăçĕнчи районсен ресурсĕсене оборона валли мобилизацилесси çинчен Уралăн, Хĕвеланăç Çĕпĕрĕн тата Казахстанăн ресурсĕсене мобилизацилес енĕпе ĕçлекен комиссин председателĕ — Академи президенчĕ В. Л. Комаров тата председатель заместителĕ вице-президент И. П. Бардин докладсем туса панă. Комаровпа Бардин академиксен доклачĕсем тăрăх Наукăсен Академийĕн пĕрлехи пухăвĕ резолюци йышăннă, унта ресурссене мобилизацилес енĕпе ĕçлекен комисси ĕçĕсен итогне тунă тата унăн малашнехи ĕçĕсене палăртнă.

Лару вĕçленес умĕн Комаров академик сĕннипе пĕрлехи пуху Молотов юлташ патне салам яма йышăннă.

Каçхи ларура «Физика тата вăрçă» темăпа А. Ф. Иоффе академик, «Биологи тата вăрçă» темăпа Л. А. Орбели академик тунă докладсене итленĕ.

Н. С. Державин академик совет ученăйĕсен фашизма хирĕçле комитечĕн задачисем çинчен каласа панă, наукăра ĕçлекенсене пурне те çав комитетăн ĕçне активлăн хутшăнма чĕннĕ.

* * *

СВЕРДЛОВСК, майăн 8-мĕш. (ТАСС). Паян СССР Наукăсен Академийĕн пĕрлехи пухăвĕн юлашки ларăвĕ пулнă. Наукăсен Академийĕн структурине тата аппаратне вăрçă вăхăчĕ хушнă пек урăхла йĕркелес ыйтăва сўтсе явнă. Пĕрлехи пуху Наукăсен Академийĕн çĕнĕ президиумне центральнăй аппарата урăхла йĕркелессине тата пĕчĕклетессине хăвăртрах пурнăçа кĕртме, Академин структурине улăштарассипе çыхăнса тăракан сĕнўсене тепĕр пухуччен хатĕрлеме хушса хăварнă.

Вăрттăн сасăланипе СССР Наукăсен Академийĕн действительнăй членĕсем пулма Академин член-корреспонденчĕ А. Е. Арбузов, профессор Я. О. Парнас, Украинăри Наукăсен Академийĕн академикĕ А. В. Палладин, профессор С. И. Спасо-Кукоцкий, Академин член-корреспонденчĕ П. Г. Бруевич суйланнă.

Наукăсен Академийĕн президенчĕ Комаров академик сĕннĕ тăрăх, пĕрлехи пуху Уралăн, Хĕвеланăç Çĕпĕрĕн тата Казахстанăн ресурсĕсене оборона валли мобилизацилес енĕпе ĕçлекен комиссие суйланă.

Наукăсен Академийĕн президенчĕ Комаров академик сĕннипе пĕрлехи пуху Наукăсен Академийĕн хисеплĕ членĕсем пулма наукăра ĕçлекен паллă деятельсене — Англин икĕ ученăйне тата Америкăн виçĕ ученăйне пĕр саслăн суйланă. Англири королевски обществăн председательне Генри Делл физиолога; фашизма хирĕçле паллă обществăллă деятеле, Лондон университечĕн профессорне Холдэйн биолога; Америкăри паллă физиолога — Вальтер Кеннона; чучухнехи паллă химиксенчен пĕрне — Гильберт Льюиса; малтанхи циклотрона — атом чăмăрне вакламалли аппарата шухăшласа кăларнă Э. Лоуренс физика.

Кун хыççăн пĕрлехи пуху пĕтĕм тĕнчери ученăйсем патне чĕнў яма йышăннă. Наукăсен Академийĕн президенчĕ В. Л. Комаров юлашки сăмах каланă хыççăн Наукăсен Академийĕн пĕрлехи пухăвĕ хупăннă.

Хĕрарăмсен — отечественнăй вăрçă участницисен митингĕ

Майăн 10-мĕшĕнче 14 сехетре хĕрарăмсен — отечественнăй вăрçă участницисен митингĕ пулать. Ăна совет хĕрарăмĕсен фашизма хирĕçле комитечĕ туса ирттерет. (ТАСС).

25.000 тенкĕ выляса илнĕ

ГОРЬКИЙ, майăн 7-мĕш. (ТАСС). Кулебакски районри Гремячево колхозĕнчи колхозница укçа тенкĕпе япала лотерейин 10 тенкĕ тăракан билечĕпе 25.000 тенкĕ выляса илнĕ.

Чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕсем

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: пирĕн земляк — старши лейтенант Иван Васильевич Смирнов (Комсомольски районри Çĕнĕ Сĕнтĕр ялĕнчен). Вăл отечественнăй вăрçă хирĕнче хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр çапăçса, паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ (тĕплĕнрех çырнине «Чăваш Коммуни» хаçатăн Майăн 1-мĕшĕнче тухнă номерĕнче вулăр).

БОЕЦРАН — БАТАРЕЯ КОМИССАРĔ

Вăл кун кану кунĕ пулнă. Курсантсем çывăрса тăнă хыççăн васкамасăр çăвăнса тасалнă. Хăшĕсем шахмătла выляна, хаçат-журналсем вулана, теприсем тăванĕсем, юлташĕсем патне çырусем çырнă...

Ирхи апат хыççăн взвод командирĕ Ткаченко юлташ Петрова хăй патне чĕннĕ.

— Паян боевой снарядпа перетĕр. Хатĕрленĕр... Кашни курсантăн пенĕ чухне кирлĕ таблица алăра пултăр...

Курсантсем çавтери савăннă. Паян вĕсем хăйсем тĕллĕн пĕррремĕш хут боевой снарядпа переççĕ. Çавăнпа та кашниех упражнение отлично пурнăçласа, малти вырăна йышăнас ĕмĕтпе çуннă. Полигона каймалли çеç юлнă. Анчах... Сывлăшра пулеметран пенĕ сасă илтĕнет. Мĕне пĕлтерет ку? Самолетсен учебнăй маневрĕ мар-ши? Çук, ун пек япала мар. Акă пĕр самолечĕ çунса çĕр çине сирпĕнсе анать... Самолетран икĕ парашют уйăрăлчĕ. Самолечĕ «Хейнкель — 111», летчикĕсем — нимĕçсем... Паллă ĕнтĕ. Хальхи пек астăвать Петров радио тăрăх Молотов юлташ тухса каланă сăмаха итленĕ хыççăн боевой задача илнине. Н. районĕнче тăшман пысăк десант антарнă. Çак кун курсантсен малтанхи боевой снарячĕсем чĕрĕ мишеньсем çинелле вăркăннă. Çапла пуçланă чăваш ачи Петров отечественнăй вăрçăн малтанхи кунне Хĕвеланăç Украинăра.

Вунă уйăх хушши Яков Петрович Петров юлташ (вăл Шăхасан районĕнчи Уйпуç Шĕкĕр ялĕсем, çара киличчен Канашра халăх сучĕн секретарĕ пулса ĕçленĕ) пенĕ снаряд нимĕçсен сахал мар тупписене, сахал мар салтакĕсене çапса салатнă. Петров юлташ — тăван çĕршывăн сулăмлă патриочĕ, нимĕç оккупанчĕсене хирĕç вăя, пурнăçа шеллемесĕр çапăçать. Нумай пулмасть Петров чăн-чăн паттăрлăхпа хăюлăх кăтартрĕ. Часть Л. ялĕ çине наступлени туса пынă. Нимĕç салтакĕсем, совет артиллеристчĕсем, автоматчикĕсем тĕлпенине тўсеймесĕр тăшман ялтан тухса сирпĕннĕ. Нумайĕшĕ вĕсенчен унтах вилĕм тупнă. Л. ялĕ каллех совет ялĕ пулса тăнă. Гитлеровецсене пĕрлесе пехотинецсем малалла кайнă.

Çак вăхăтра тупă умне дежурнăй наводчик Петров тăнă. Кĕтмен çĕртен тăшман ялăн сылтăм енчен пĕр ротăна яхăн автоматчиксем ярса тăвать танк пулăшнипе Л. ялĕ çине контрнаступлени туса пынă. Петров çак картинăна лайăх курнă, кучченеç пама хатĕрленнĕ.

— Çывăхарах килччĕр, çĕлен-калтасем! — шухăшланă вăл. Петров, тупă патĕнче пĕр пĕччен пулнă пулин те, пăлханмен. Танксем Петровăн туппи патнелле çывхарса пынă. Акă пĕр 150 метр çеç юлнă. Çак вăхăтра Петров юлташ колонна пуçĕнчи танка пĕррремĕш снарядпа стройран кăларать. Ыттисем каялла çавăрăнаççĕ. Кун хыççăн автоматчиксем Петрова чĕррĕн тыткăна илме тапаçланаççĕ. Хастарлă наводчик вĕсене картечпа персе çапса сирпĕтет, икĕ пулемета персе салатать. Çак вăхăтра Петров патне пулăшу çитет. Гитлеровецсем, 50 салтакпа офицера яхăн çухатса, каялла тараççĕ.

Петров юлташ отечественнăй аслă вăрçăн çапăçу хирне наводчик пулса кĕнĕ. Наводчикрен — оруди командирĕ. Çапăçура хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн ăна Правительство наградине пама тăратнă. Нумай пулмасть ăна ВКП(б) кандидатне илнĕ. Халĕ вăл кĕçĕн политрук, батарея комиссарĕ.

Лейтенант Ил. СОРОКИН.
Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ.

ЭПИР ХАЛĂХ ĔÇĔШĔН ÇАПĂÇАТПĂР

КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ. Пирĕн подразделени тĕрлĕ нацири боецсенчен тăрать. Вырăссем, украинецсем, тутарсем, еврейсем, чăвашсем тăшмана хирĕç алла-аллăн тытăçса кĕрешеççĕ. Эпир туслăн пурăнатпăр. Пирĕн пурин те пĕр ĕмĕт — ылханлă тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкасси.

Ефрейтор Яшкин — чăваш. Ăна пирĕн часра хисеплеççĕ, мухтаççĕ. Г. ялĕшĕн кĕрешнĕ чухне Яшкин юлташ хăйĕн калăхне тата тăван çĕршыва чĕререн парăнса тăнине кăтартса панчĕ. Çапăçура унăн юлташĕсене амантнă пулнă. Анчах Яшкин хăраса ўкмен. Çурăмĕ çине катушка çакса вăл çўллĕ вырăнтан ял патнелле шуса пынă. Тăшман вăйлăн персе тăнă пулин те, çыхăнăва вăхăтра йĕркелесе янă. Яшкинăн паттăр ĕçне Правительство пысăк хака хунă, Яшкина «За боевые заслуги» медаль парса наградăланă.

Çакăн пек примерсем нумай илсе кăтартма пулать. Грузин-красноармеец Кватарадзе юлташа сержант званине панă.

Фашистла мерзавецсем хăйсем оккупациленĕ совет районĕсенчи халăха мĕнле асаплантарнине эпир пĕлетпĕр. Вĕсем старике сене те, ачасене те хĕрхенсе тăмаççĕ. Орел, Киев, Одесса, Кишинев хулисенче тата ытти хуласемпе ялсенче виселицăсем тăратса тухнă. Нимĕçсем пулнă çĕрте пур çĕрте те пушар алхасать.

Пирĕн нумай нациллĕ совет халăхĕ хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн, никама пăхăнмасăрлăхĕшĕн, юнпа кĕрешсе илнĕ прависемшĕн кĕрешет, вăл çакна лайăх пĕлсе тăрать: пирĕн тăван çĕршыва фашистла захватчиксем нихăçан та хăйсене пăхăнтараймĕç!

Кĕçĕн сержант М. ЛЬВОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 8-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 8-мĕшĕнче фронтра нимĕнле пысăк улшăнусемех те пулман.

Майăн 7-мĕшĕнче нимĕçсен 36 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 16 самолет пĕтнĕ.

* * *

Майăн 7-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашинине, артиллерин 2 батарейине, зенитнăй пулеметсен 3 точкине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен икĕ складне тата горючин пĕр складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине пĕр ротăна çити çапăласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем, икĕ кун хушши çапăçса, тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллери тата разведка тăвакан группăсем противникăн 3 дзотне, 5 блиндажĕпе землянкине çĕмĕрнĕ, 2 полевой орудине, 4 пулеметне тата 2 минометне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинский юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделени хаяррăн çапăçса нимĕçсенне 118 винтовкăпа автомат, 21 пулемет, 2 тупă, 3.000 мина, 2 радиостанци тата снарядсемпе патронсем нумай тытса илнĕ. Тăшманăн 350 салтакĕпе офицерĕ ытла вилсе пĕтнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противник пирĕн позицисене атакăланă. Артиллерирен тата пехотăн хĕçпăшалĕсенчен персе, нимĕçсен атакине сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн çĕршер виллисем выртса юлнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче гвардейски чаçăн артиллеристĕсем тăшманăн 3 блиндажне çĕмĕрнĕ, темиçе станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă тата 120 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ.

* * *

Медведкин юлташăн батарейинчи артиллеристсем çапăçусенчен пĕринче нимĕçсен 5 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Красноармеец-минер Кузнецов юлташ темиçе кун хушшинче нимĕçсем минăсем хурса хăварнă участок çинчен 700 противотанковăй мина кăларса сиенсĕрлетнĕ.

* * *

З. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ, Калинин облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, Н. поселок çине сасартăк пырса тапăннă та 100 гитлеровеца, 6 автомашинăна пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 61-мĕш пехотнăй дивизин 151-мĕш полкĕнчи 10-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ санитар Иосиф Айзель çапла каласа панă: «Нимĕç салтакĕсем чылайĕшĕсем вăрçă пирки кӳренсе калаçаççĕ. Дисциплинăна хытă пăснисем тата приказсене пурнăçа кĕртменнисем ӳссе кайнă. Апрелĕн 19-мĕшĕнче фельдфебель Фауст пирĕн полкри салтака Гуго Биркнера разведкăна кайма хушрĕ. Биркнер разведкăна кайма отказ пачĕ те çапла каларĕ: «Урăх хама хам вилĕм умне тăратмастăп, манăн арăмпа ачасем пур. Хуть те çакăнтах персе пăрахăр — разведкăна каймастăп», терĕ.

* * *

11-мĕш мотополкăн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Гейнц Бегер çапла каласа панă: «Францире чухне эпĕ 81-мĕш дивизире пулнă, вăл дивизи халь Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтăн вăтаçĕрĕнчи участокĕнче тăрать. Россиăна ярас умĕн дивизире пăлхавсем пулса иртрĕç. Салтаксем хăйсене киле яма ыйтрĕç. Пăлхав пуçласа яракансене командовани питĕ хаяррăн тавăрчĕ, — 125 çынна персе пăрахрĕ. Персе пăрахнисем хушшинче 25-ĕшĕ пирĕн ротăран».

* * *

Калинин облаçĕнчи Жуково ялĕнче, халĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнăскерĕнче, пурăнакан çынсем çапла каласа панă: гитлеровецсем çапăçусенчен пĕринче йывăр аманнă пирки юн юхтарса выртакан красноармееца Третьякова тытнă та, сарайне сĕтĕрсе кайса, хаяррăн асаплантарнă. Гитлеровецсем аманнă боецăн чĕлхине, хăлхисене касса татнă тата пӳрнисене çапса çĕмĕрнĕ.

Майăн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 9-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле пысăк ĕçсемех те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 700 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче гитлеровецсем, хăйсем çухатнă рубежсене каялла тавăрас тесе, контратака туса пăхнă. Пирĕн боецсем çав контратакăна, противника йывăр çухатусем кӳрсе, сирсе пăрахнă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 400 çын ытла вилсе тата аманса юлнă.

* * *

Калинин фрончĕн пĕр участокĕнче противникăн пехоти, 20 танк пулăшса пынипе, совет войскисем вырнаçса тăнă çĕре сăвăлланса кĕме хăтланнă. Пирĕн боецсем вăйлăн персе тăнипе тăшманăн каялла чакма лекнĕ. Нимĕçсен 4 танкне тата 100 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Çав çапăçура старши лейтенант Аристов командир пулса ертсе пыракан артиллери батарейи хăйне уйрăмах палăртнă. Хăйсен орудийĕсенчен персе, артиллеристсем нимĕçсен икĕ танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Снайпер Гальчук юлташ икĕ уйăх хушшинче 72 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Вăл хăйĕн подразделенийĕнчи темиçе красноармееца снайпер искусствине вĕрентсе хатĕрленĕ. Унăн ученикĕсем: Шулепов юлташ—63 нимĕçе, Скорик юлташ—38 нимĕçе пĕтерсе тăкнă.

* * *

В. пункт районĕнче нимĕç салтакĕсен пысăк ушкăнĕ пирĕн енне каçма хăтланнă. Пирĕн окопсем еннелле чупакан салтаксем çине гитлеровецсем пулеметсенчен пеме тытăннă. Çавăнта виçĕ çын вилнĕ, ыттисем вара пирĕн енне каçма пултарнă. Тыткăна хăйсен ирĕкĕпе парăннă нимĕç салтакĕсем пирĕн чаçăн командирне çапла каласа панă: нимĕç халăхне ыйлă та шанчăксăр авантюрăна туртса кĕртнĕ Гитлерăн тата унăн шайкинĕн çапăçăвĕсенчен вĕсем персе пăрахассинчен хăраса ăсаппăр пирĕн енне каçма шут тытрăмăр.

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче партизансен 4 отрячĕ нимĕçсен икĕ юнашар ялта вырнаçнă гарнизонĕсем çине пĕр вăхăтрах пырса тапăннă. Партизансем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 420 çынна пĕтерсе тăкнă, горючи хунă склада тата боеприпассен икĕ складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен обер-ефрейторĕ Иозеф Гайлике нумаях пулмасть Бертольд салтак патне çапла çырнă: «Вырăссене хаклас тĕлĕшпе эпир пурте йăнăшрăмăр. Вĕсем лайăх çапăçаççĕ, тĕл перессĕ. Уйрăмах пире артиллерин вутçулăмĕ асаплантарать. Эпир питех те йывăр кунсем пурăнса ирттеретпĕр. Унашкал йывăр кунсем малашне мĕн чухлĕ пулĕç-ха тата? Пирĕн юлташсем татах питĕ нумайăн пĕтрĕç. Юлашки çапăçура эпир каллех 12 салтак çухатрăмăр. Çава патне кайччăр наградăсем, пурнăçа кăна сыхласа хăварасчĕ. Ыттисем çине эпĕ йăлтах суратăп. Санăн та çакăн пек шухăшах пулĕ тесе шутлатăп».

* * *

«СС» ятлă полицейски дивизири салтак Николаус Григориус апрелĕн варринче Эммануил Шварц патне çапла çырнă: «Пирĕн юлташсенчен сахаллăшĕсем сыхланса юлчĕç. 10 пин салтакран темиçе çĕр салтак кăна тăрса юлчĕ. Ку çĕршывран сывă та чĕррĕн таврăнакан çын телейлĕ пулĕ. Эсир Пауль аманнă тесе çыртăр. Тăван çĕршыва таврăнас тесе хăйсене хăйсем персе аманттаракансене ăмсанма кăна пулать. Кунта пирĕн çанталăк ăшăтрĕ. Шурлăхлă выранта палаткăсенче пурăнатпăр, анчах кăнтăрла та, çĕрле те канăç çук. Çак инкек-синкексенчен эпир хăçан хăтăлса юлăпăр-ши?»

* * *

Гитлеровецсем хăйсем оккупациленĕ çĕршывсенчи халăхсене выçăпа вилес патне тăратнă. Брюссельре тухакан «Нуво журналь» хаçат çапла çырать: «Туберкулезпа чирленĕ ачасен йышĕ Бельгире уйăхсерен 2000-шер çын ӳссе пырать. Хальхи вăхăтра Бельгире 200.000 ача вилес хăрушлăх умĕнче тăрать». Нимĕçсем контрольлесе тăракан хаçат пичетлесе кăларнă çак даннăйсене, паллах, чылай пĕчĕклетнĕ, вĕсем фашистла оккупантсен пусмăрĕ айĕнче тĕн куракан Бельги халăхĕн асапĕсене çиелтен кăна кăтартса парать.

НИМĔÇ ВОЙСКИСЕМ ОТРАВЛЯЮЩИ ВЕЩЕСТВОСЕМПЕ УСĂ КУРАÇÇĔ

КРАСНОДАР, майăн 8-мĕш. (ТАСС). Нимĕç войскисем ĕнер Крым фронтĕнчи операцисем тунă вăхăтра отравляющи веществосем пултарнă темиçе мина пăрахнă. Тĕрĕслесе тухни çакна кăтартса панă: отравляющи веществосем пуранчен ытларах этемĕн сывламалли органĕсене сиенлеççĕ, боецсене стройран кăлараççĕ.

Урамсене йывăçсем лартаççĕ

СЕНТЕР. (Хамăр корр.). Çуркунне тăртнă йывăçсем лайăххрах чĕрĕлнине шута илсе, район центрĕнчи ĕççыннисем йывăç лартса симĕслетес ĕçе пуçарса ячĕç. План тăрăх район центрĕн урамĕсене мĕнпурĕ 450 йывăç лартмалла. Кашни 3 метр хушшинче 1 йывăç пулмалла. Çакна май кашни учреждениех миçе йывăç лартмаллине кăтартса панă. Паянхи куна 300 тĕп акаци тата 100 тĕп сирень кăларса хатĕрленĕ. Район центрне симĕслетес тĕлĕшпе çулйĕр отделĕн заведующийĕ Атласкин юлташ ответлă пулса ĕçлет.

Г. А.

Акас ĕç сухалас ĕçрен юлса пымалла мар!

Сменăра 12 гектар сухалать

ÇĔМĔРЛЕ, майăн 9-мĕш. (Телефонпа). Паллă тракторист Федотов юлташ çуракине тухнăранпа газогенераторнăй тракторпа пурĕ 90 гектар сухаларĕ. Çапла вăл çуракинче хăйĕн тракторĕпе сухаламалли планран ирттерсе 25 гектар сухаланă. Федотов юлташ çуракинче стахановла хăвăртлăхпа ĕçлет. Сменăри норма 5,4 гектар пулсан, вăл вăтамран илсен кашни сменăрах 9—10 гектар сухалать. Майăн 8-мĕшĕнче Федотов юлташ хăйĕн тракторĕпе 12 гектар сухаларĕ. Çакăн пек паха çитĕнӳсене вăл хăйĕн тракторне юратса пăхнипе, ăна вăхăтра сĕрсе тасатса тăнипе тăвать. Федотов юлташ трактортан вăл мĕн чухлĕ пама пултарнине йăлтах илме тăрăшать, трактора сменăра пĕр чарăнмасăр ĕçлеттерет.

Çавăн пекех, çамрăк трактористкăсем Чалбаевăпа Уфилькина юлташсем те сменăра 6—9-шар гектар таран сухалаççĕ. Норма 5,4 гектар пулсан, майăн 6-мĕшĕнче Чалбаева юлташ 6,1 гектар сухаланă.

Çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттерессишĕн пуçарса янă социализмлă ăмăрту сарăлсах пырать. Трактор бригадисем кунран кун лайăхрах ĕçлеме тытăнаççĕ. Тихонов юлташ ертсе пыракан трактор бригади паянхи куна 150 гектар сухаланă, Чуркин юлташăн бригади—130 гектар сухаланă.

Х. ЛИСИН.

—⊙—

Хĕрарăмсем ответлă ĕçсенче

КАЛИНИНО. Анат Карачурари «Социализм çулĕпе» колхозăн кладовщикĕ К. Иванов юлташ Хĕрлĕ Çар ретне кайрĕ, унăн вырăнне Х. Михайлова юлташ йышăнчĕ. Шнаккассинчи «Броневик» колхозăн пĕрремĕш бригадине ертсе пыма Е. Сергеева юлташа уйăрнă, вăл хăйĕн ĕçне тăрăшса туса пырать. Ермошка ялĕнчи кооператив правленийĕн председателĕнче Малова юлташ ĕçлет.

Çапла вара, халĕ хĕрарăмсем ĕлĕк арçынсем ĕçленĕ ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ.

Б. ШОРНИКОВ, В. МАЛЬЦЕВ.

Кахалсем

Уйкас-Явăлпри Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем уйăра кĕрсех суха тăваççĕ, тырă акаççĕ. Кашни колхозник, колхозница çуракине вăхăтра ăнăçлăн туса ирттерес тесе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Ир ирех ĕçе тухса мĕн каç пуличченех хĕрӳллĕн ĕçленĕ колхозниксем апатланнă хыççăн ирччен канма выртаççĕ. Пĕр Иван Горбатов кăна каçсерен ял урамĕ тăрăх балалайкăна чанкăртаттарса çӳрет. Пурне те йăлăхтарса çитернĕ Ваньăка урам тăрăх кайсан, ĕç хыççăн канма хатĕрленекен колхозниксем чĕречерен пăхса:

— Акă, ĕççĕр сĕтĕрĕнсе çӳрекен Ваньăка тухрĕ каça çĕмĕрме,—теççĕ.

Иван Горбатов колхоз ĕçне кăçал мĕн пурĕ те 2 кун çеç тухнă, унта та ĕç пĕтиччченех тарса кĕнĕ. Çапла вара вăл халь пĕр ĕçкунĕ те туман-ха. Эсир тĕлĕнетĕр пулĕ, мĕнле-ха апла пулма пултарать, ĕçлемелĕх çулĕ çитмен пулĕ унăн, тейĕр. Çук. Иван Горбатов 18 çулти каччă, сывлăх енчен те вăл сирĕнтен кая мар. Анчах ĕçлеме вăл юратмасть. Бригадир ăна ĕçе тухма пырса та чĕннĕ. «Пуç ыратать», «ĕнсе ыратать»—тет вăл. Анчах каç пулсанах вăл урама тухать, балалайкине йăтать те çӳрет вара тăр-пĕччченех. Ваньăн юлташĕсем,—камах вара халĕ ĕççĕр сĕтĕрĕнсе çӳреме килĕшĕ? Çĕршывăн пурнăçне ăнланман, ĕçе юратман çын пĕр Иван Горбатов çеç, тата...

Çамрăк вăйпитти пĕр Юля Димитриева пир тĕртет. Ялти ытти хĕрсем часах ак каçсерен пир çапма тытăнаççĕ. Мĕншĕн тесен кăçал тĕртнĕ пир тăрăхĕсене вĕсем юр çине сарасара хурса шуратма ĕлкĕрнĕ, çуса тасатса кантăсем çине типĕтме çакнă. Çак килти ĕç вĕсене колхозра ĕçлеме пĕре те чарман. Юля Димитриева каярах юлнă. Ытти хĕрарăмсем çуракинче тата колхозăн фермисенче хĕрсех ĕçлеççĕ, вăл халĕ пĕр ĕçкунĕ те туман-ха. Бригадир Юльăна ĕçе тухма чĕнсен, вăл:

— Пир тĕртсе пĕтермен-ха, ĕçе тухаймастăп,—тесе каласа ярать. Бригадир çапла пулнине чăтрĕ-чăтрĕ те, пĕррехинче...

Колхозниксем, колхозницăсем Сталин юлташ Майăн 1-мĕшĕнче панă приказа итлеме пухăнчĕç. Сталин юлташăн боевой приказĕ кашни колхозникĕн чĕрине кĕрсе татах та ытларах, лайăхрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. Умра тăракан пысăк та ответлă задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама кашни колхозникĕн, колхозницăн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме кирли курăнчĕ. Бригадир ĕçрен пăрăнса çӳрекен кахалсем çине тĕллесе кăтартрĕ. Колхозниксем, уйрăмах колхозницăсем, Иван Горбатовпа Юля Димитриевăна ĕçрен пăрăнса çӳренĕшĕн хыттăн ятларĕç.

— Ĕçлеместĕр пулсан, ĕçлеттерĕпĕр,—терĕç.

Е. ВОРОБЬЕВ.

КАЛИНИНСКИ РАЙОН.

Трактор мĕншĕн ахаль ларать

СЕНТЕРВĂРРИ. Майăн 9-мĕш. (Телефонпа). Ярунов ертсе пыракан трактор бригадинче пурĕ 3 трактор пулмалла. Вĕсем пурте СТЗ-НАТИ тракторсем. Иккĕшĕ «Красный Волгарь» колхозăн уйхирĕнче ĕçлеççĕ, виççĕмĕшĕ—«Красная звезда» колхозра.

«Красный Волгарь» колхозăн уйхирĕнче трактористсем Артамонов тата Борзов юлташсем стахановла тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Вĕсем талăкне 20 сехет хушши ĕçлесе, кашни кунах 2—3 норма тăваççĕ. СТЗ-НАТИ кашни тракторпа сменăра 7,5 гектар сухаламалла пулсан, Артамоновпа Борзов трактористсем 15—20-шер гектар таран сухалаççĕ.

Анчах «Красная звезда» колхозри трактора халĕ те ĕçе кĕртмен-ха. Паха машина — СТЗ-НАТИ хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче усăсăр ларать. Мĕншĕн-ха ăна ĕçе ямалла пулман? Колхозра авăн çапнă çĕрте ĕçленĕ трактора юсаман, ĕçлеме те пултарать вăл, те пултараймасть — МТС-ра пĕлмеççĕ.

МТС директорĕн Ельмаков юлташăн тракторсене хаклама вĕренмелле.

А. Р.

Лăпкă океанăн Кăнтăр-Хĕвеланăç пайĕнчи вăйлă çапăçу

ЛОНДОН, майăн 8-мĕш. (ТАСС). Союзниксен Австралири хĕçпăшаллă вăйĕсен командовани штабĕн коммюникинче çапла каланă: Лăпкă океанăн Кăнтăр-Хĕвеланăç пайĕнче пинĕç çинче те, сывлăшра та вăйлă çапăçу пырать. Ĕнерхи коммюникере японецсен пĕр çăмăл крейсерне, икĕ эсминецне, тăватă канонеркине, пĕр транспортне путарни çинчен тата пĕр çăмăл крейсерне, пĕр транспортне, пĕр гидроавиаматкине, пĕр грузовой суднине сиенлени çинчен пĕлтернĕччĕ. Англипе Америка флочĕсем унсăр пуçне тата японецсен пĕр авианосецне путарнă, тепĕрне хытă сиенленĕ, ăна ĕнтĕ пĕтнĕ тесе те шутлама юрать, теççĕ. Японин тата пĕр йывăр крейсерне путарнă, тепĕр йывăр крейсерне хытă сиенленĕ. Союзниксен çухатăвĕсем çинчен коммюникере каламан.

Коррегидор парăнни

ЛОНДОН, майăн 7-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Америка войскисем Коррегидорта тата Манила заливĕн çирĕплетнĕ ытти утравĕсем çинче кĕрешме чарăннă.

Коррегидор утравĕ çине японецсен чаçĕсем пырса кĕнĕ.

Коррегидор — пысăк утрав—Манила заливне кĕнĕ çĕрти крепость. Çав утрав çине японецсем сывлăшран та, тинĕсрен те кунĕн-çĕрĕн персе тăнă. Юлашки вăхăтра Коррегидор çинче боеприпассем те, продовольстви те çителĕклĕ пулман.

Рейтер агентствин военнăй обозревателĕ Анналист каланă тăрăх, çав утрава çухатни Филиппинра тăшмана хирĕç организованно тăрас ĕç чарăнса ларнине пĕлтерет, анчах уйрăм пунктсенче çапăçусем пулма пултараççĕ-ха.

Бирмăран халăх куçни

НЬЮ-ЙОРК, майăн 7-мĕш. (ТАСС). Радио тăрăх пынарсем сарăкан Колумбия ятлă компани çапла пĕлтерет: индеецсем сахалтан та 250 пин çын ытла Бирмăран Индие куçса пынă. Вĕтам шутпа унта кашни кун 2 пин çын куçса пырать.

КИТАЙ ВОЙСКИСЕМ НАНЬЧАН ÇИНЕ ПЫРСА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, майăн 8-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Чунцинри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Китай войскисем Наньчан хули çине сасартăк пырса тапăннă чухне урамсенчи çапăçусенче 30 японеца вĕлернĕ. Кунсăр пуçне чугунçул кĕперне сирпĕнтерсе янă тата шоссене çĕмĕрнĕ. Корреспондент малалла çакна кăтартса парать: Китай войскисем Амее пырса аннă та, японецсене пырса çапса, хуларан каллех тухса кайнă.

Англири ялхуçалăх рабочийĕсем Совет Союзне саламлани

ЛОНДОН, майăн 8-мĕш. (ТАСС). Англири ялхуçалăх рабочийĕсен чылай организацийĕсем Совет Союзне саламсем янă.

Транспортниксен союзĕнчи ялхуçалăх рабочийĕсен секцин секретарĕ Ходжсон саламлă çырура çапла каланă: «Хăйĕн тăван çĕршывне никам çĕнтерейми хастарлăхпа тата çирĕплĕхпе хӳтĕлекен вырăс халăхне союз членĕсем тивĕçлипе ырлаççĕ», тенĕ. ССР Союзĕ пулас тырпула кĕтсе илме вăйлăн хатĕрленнине палăртса, Ходжсон: çавăн пекех Англири ялхуçалăх рабочийĕсем те тăшмана пĕтĕмпе çĕнтеричченех мĕнпур вăйпа тăрăшса ĕçлĕç, тесе çырать.

Англири ялхуçалăх рабочийĕсен национальнăй союзĕн саламĕнче çапла каланă: «Сирĕн çĕршывпа пирĕн çĕршыв пĕрласлă ĕçе туса пыракан союзниксем пулса тăраççĕ, юлашкинчен ырă шухăшлă вăйсем çĕнтереççех. Эпир вăрçăн хаярлăхĕнчен пĕрле хăтăлса тухăпăр та хамăр тунă çĕнĕ тĕнчере пурăнма тытăнăпăр».

«Фермерсен национальнăй союзĕ, Англипе Уэльс фермерĕсене пĕрлештерсе тăраканскер, — тесе каланă çав союзăн председателĕ янă саламра, — Совет Союзĕнчи хăйĕн тăванĕсем патне салам ярать, Совет Союзĕнчи тăвансем те, пирĕн пекех, Германие хирĕç пыракан вăрçа ăнăçлăн вĕçлемешкĕн хамăрăн халăхсене апат-çимĕç парса тăма çĕртен мĕн илме пулать, çавсене йăлтах илме хатĕр».

Финляндире çураки пирки ĕçсем начар

СТОКГОЛЬМ, майăн 8-мĕш. (ТАСС). Финляндире çуракине ирттересси çинчен финсен пичетĕнче çырнă статьясем çав ĕç хăрушлăх умĕнче тăнине палăртаççĕ. Хаçатсем ĕç вăйĕ, туртăм вăйĕ, вăрлăхсемпе удобренисем нумай çитменни çинчен çыраççĕ. «Хельсингин саномат» хаçат çапла калать: çуракипе кĕрекки валли вăрлăхлăх хăварнă тырă фончĕсене çисе янăшăн хресченсем влаçсене хытă критикăлаççĕ. Çав вăхăтрах кĕр тыррисен тухăçĕ лайăх пуласси те шанма çук.

«Ууси суоми» хаçат каланă тăрăх, «Финляндири хресченсем çуракине тума питех те йывăр условисенче тытăнаççĕ». «Ĕç вăйĕ тата туртăм вăйĕ пирки ытту питĕ çивĕч тăрать. Хресченсем кĕрхи тырăсене акса хăварман тата кĕрхи суха туса хăварман. Паллах ĕнтĕ, сыхланăллăн тунă плана та пурнăçа кĕртме май çук», тесе çырать хаçат.

Сутуилӳре закона пăснăшăн правительство хресченсене массăллăн судла айăплать. «Суомен сосиалидемократти» хаçат çапла пĕлтерет: «Лиатала» общининче 70 хресчене суд туса айăпланă. Тепĕр районра 40 çынна суда панă. «Эттенпейн» хаçат хресченсем çине тапăнма хушать, ун шучĕпе хресченсем хушшинче «мăнкăмăллăх» ытларах, мĕншĕн тесен вĕсем «государствăна пур майсемпе те улталама тăрăшаççĕ. Çав хаçат влаçсене ялти халăха тата ытларах хĕсме хушать.

Финляндире лару-тăру питĕ çивĕчленсе çитнĕ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 8-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Стокгольмри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Финляндире лару-тăру питĕ те çивĕчленсе çитнĕ. Вăрçă ĕçĕсем ăнса пымани тата продовольстви çитменни халăхăн шухăш-кăмăлне майĕпен начарлатсах пырать. Пур партисем те çакна кăтартса параççĕ: хĕлле те çапăçмалла пуласси Финлянди правительстви кĕтмен пулас, вăл хĕллехи кампание хатĕрленмен. Пĕлтĕр кĕркунне Финляндире акмалли çĕр лаптăкĕнчен 50 процент çеç акса хăварнă. Финляндире продовольстви тĕлĕшпе пурнăç питĕ йывăр. Финлянди çуракине туса ирттерейместь, мĕншĕн тесессĕн арçынсене пурне те çара мобилизациленĕ. Гитлер тухса калани финсен çар пуçлăхĕсенне те шухăш-кăмăлĕсене шусарса ларнă.

Гитлера хирĕçле движени Францире

НЬЮ-ЙОРК, майăн 8-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви Виширан пĕлтернĕ тăрăх, Шербуртан (Франци çурçĕр енче) кăнтăртарахри Вир станци сывăхĕнче чугунçул çĕмĕрлнĕ пирки нимĕçсен çар хатĕрĕсем тиенĕ поезчĕ рельсăсем çинчен сирпĕнсе кайнă. Поезд çĕмĕрлнĕ чухне снарядсем тиенĕ вагонсем сирпĕнсе арканнă. Унтан пĕлтернĕ тăрăх, поезд крушени пуличчен Вир станци сывăхне самолет çинчен виçĕ парашютист аннă, вĕсене тупас тесе, нимĕçсем пур çуртсенче те питĕ тĕплĕн пырса тата ухтарса тухнă пулсан та, парашютистсене тупайман.

Кан хули сывăхĕнче (Франци çурçĕрĕнче) нумаях пулмасть нимĕç салтакĕ çине тапăннă пулнă. Оккупациллĕ влаçсем, çавăншăн тавăрса, Кан хулинче 30 француза, Роморатăн ялĕнче 10 француза асаплантарса вĕлернĕ. Нимĕç салтакĕ çине тапăннă çынсене тупаймасан оккупациллĕ влаçсем Роморатăн ялĕнчи тата тепĕр 10 çынна асаплантарса вĕлересипе хăратаççĕ.

Тува халăх республикин делегацийĕ тăван çĕршывне тухса кайнă

Действующи Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем, командирĕсемпе политработникĕсем патне Тува халăхĕ ярса панă парнесен эшелонĕпе пĕрле килнĕ Тува халăх республикинчи ĕççыннисен делегацийĕ Мускавра темиçе кун хăналаннă. Делегаци пуçлăхĕ — республикăн революциллĕ халăх партийĕн Центральный Комитет секретарĕ Тока, делегаци членĕсем — шалти ĕçсен министрĕн заместителĕ Артас, революциллĕ халăх çарĕн капитанĕ Лопоян, писатель Сагаиоол, республикăри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри паллă çынсем Инажикпа Саны-Шири, Кызылри предприятисен стахановкисем Парынмапа Торокапова столицăри музейсемпе выставкăсене пăхнă, Мускаври паллă театрсен спектаклĕсенче пулнă.

Делегаци Хĕрлĕ Çарăн боецĕсене парнесем пама Хĕвеланăç фрончĕн действующи чаçĕсене кайса килнĕ тата гитлерла çарсене хирĕç нумаях пулмасть пулса иртнĕ çапăçусен вырăнĕсене çитсе курнă. Делегатсем арми генералĕ Жуков юлташ патĕнче пулнă. Туслă каласура вĕсем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене ăнăçлăн çĕмĕрекен Хĕрлĕ Çарăн паттăрла çĕнтерĕвĕсенчен хăйсем тĕлĕннине каласа панă.

Майăн 3-мĕшĕнче делегаци СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн заместителĕ А. Е. Бадаев патĕнче пулнă.

Майăн 4-мĕшĕнче делегацие СССР Совнарком Председателĕн заместителĕ В. М. Молотов юлташ йышăннă.

Ĕнер Тува халăх республикин делегацийĕ тăван çĕршывне тухса кайнă. Хăнасене вокзалра — Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн генеральнăй секретарĕ А. А. Соболев юлташ, Тува халăх республикин ССР Союзĕнчи посланникĕ Мандара, генерал-полковник Городовиков юлташ, генерал-майор Обухов юлташ, бригаднăй комиссар Беляков юлташ ертсе пынипе Хĕвеланăç фронтĕнчен килнĕ боецсемпе командирсен группи, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн инçет-хĕвелтухăçĕнчи 3-мĕш отделĕн заведующийĕ Латышев юлташ, ВОКС-ăн ответлă сотрудникĕсем тата ыттисем те ăсатса янă. (ТАСС).

—⊙—

ÇАР ĔÇНЕ ВĔРЕНЕКЕН ХĔРАЧАСЕМ

ЕТĔРНЕ. Осоавиахимăн Чуртай ялĕнчи пуçламĕш организацийĕ вуншар хĕрачана çар ĕçне 80 сехетлĕ программа тăрăх вĕрентрĕ. Вĕренӳ пунктĕнче винтовкăсем, противогазсем, тĕрлĕ хĕçпăшалсен макечĕсем çителĕклĕ пулчĕç.

Занятисем 27 куна пычĕç. Хĕрачасем занятисене пĕр сиктермесĕр çӳрерĕç. «Правда» колхозăн фермипче ĕçлекенсем—Александровăпа Андреева юлташсем пĕлӳ тĕрĕслевĕнче лайăх паллăсем илчĕç, çар ĕçне пĕлнине кăтартрĕç, ытти вĕренекенсем те нумайĕшĕ «отлично» тата «хорошо» паллăсем илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Çар ĕçне вĕренекен хĕрачасем колхозсенче пулса иртнĕ икĕ воскресникре активлăн хутшăннă. Малтанхи воскресникре вĕсем колхозсене çуракине тухма хатĕрленсе çитме пулăшнă, иккĕмĕшĕнче—тимĕр-тăмăр пухнă, пĕтĕмпе 6 центнер пухса панă.

И. ТИМОНИН.

Обязательствăсене пурнăçланă

ЭЛĔК. Государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçлани халĕ, отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче, питĕ те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавна шута илсе, Пиçенерти «ВЛКСМ-ăн IX съезчĕ» ячĕпе тăракан колхоз кăçалхи çулшăн аш-какай памалли обязательствăна 110 процент пултарчĕ, сĕт-çу иккĕмĕш кварталшăн та çак кунсенчех парса татаççĕ. Анаткассинчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз аш-какай памалли плана пурнăçласа, 1943 çулшăн 50 килограмм пачĕ. Сатлайкăри «Майăн 1-мĕш» колхоз та государствăна кăçалхи обязательство шучĕпе 350 çăмарта пачĕ.

Колхозниксем те государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татаççĕ. Охверкăри «Хăват» колхоз членĕсем Н. Воронов, Ф. Майоров, М. Марков юлташсем сĕт-çу памалли 1942 çулти обязательствăсене февралĕн 27-мĕш тĕлне пурнăçланă. Сатлайкăри колхоз членĕ Кузьма Никифоров кăçалхи çулшăн аш-какай памалли плана 100 процентчĕпех тултарчĕ, Ксенофонтий Никифоров 1943 çулти пĕрремĕш кварталшăн та государствăна аш-какай парса татрĕ. Вырăс Сорминчи «Доброволец» колхоз членĕсем Николай Червяковпа Никандр Червяков аш-какай обязательствисене пурнăçланă.

М. КУСТАКОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КОЗЛОВСКИЙ КОМБИНАТ на Волге принимает в распиловку лес в неограниченном количестве от организаций и колхозов. Возможно с последующей обработкой (стружка, шпунтовка).

Телеграфный адрес: Козловка ЧАССР Волга

ЗАВОДОУПРАВЛЕНИЕ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 475 Гор. Чебоксары, типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 269. Ф. 6. 5¾ 64 ç: ж